**Пирĕн музей**

Филипп Лукинăн Чатукассинчи музейĕ 1997 çулхи авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнче уçăлчĕ. Пĕтĕм халăхпа ниме тунă пек тăрăшса пуçтартăмăр музей экспоначĕсене: «Герой» колхоз Культура çурчĕн иккĕмĕш хутĕнче лайăх пӳлĕмсем уйăрса пачĕ, композитор мăшăрĕ Зинаида Михайловна пианино парнелерĕ, Филипп Мироновичăн япалисене, докуменчĕсене, çырăвĕсене, кĕнекисене пачĕ, Культурăпа наци ĕçĕсен министерстви, районти ремонтпа техника предприятийĕ, «Сельхозхими» пĕрлешӳ, Республикăри почта çыхăнăвĕн управленийĕ тата ытти организацисем те пысăк пулăшу пачĕç музее йĕркелеме. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Станислав Николаев та ĕç мĕнле пынипе куллен интереслене тăчĕ, пулăшрĕ. Районти ун чухнехи культура пайĕн пуçлăхĕ Владимир Серафимов ĕçне те ырăпа асăнмалла. Экспозицисене йĕркелеме, пухăннă материалсене ăслăлăх шайĕпе вырнаçтарма республикăри наци музейне ертсе пыра-

кансем Эдуард Бахмисовпа Татьяна Орлова тата Вера Шляхина нумай вӑй хучӗҫ, Н. Иванов, В. Портнов, А. Безруков художниксем канӑҫа пӗлми тӑрӑшрӗҫ.

Ҫапла майпа пирӗн музей чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗн Филипп Лукин композиторӑн пурнӑҫӗпе ӗҫне-хӗлне туллин кӑтартакан ӑслӑлӑх учрежденийӗ пулса тӑчӗ. Паянхи куна унта пилӗк пин ҫын ытла пырса курчӗ, СССР Патшалӑх премийӗн лауреачӗн, Раҫҫей халӑх артисчӗн тата ырми-канми общество деятелӗн ачалӑхӗпе, вӗренӳ тапхӑрӗпе, нумай енлӗ ӗҫӗ-хӗлӗпе паллашрӗ. Музее хамӑр тӑрӑхри ҫынсем кӑна мар, Мускав, Санкт-Петербург, Хусан, Ӗпхӳ, Йошкар-Ола ҫыннисем те ҫитсе курчӗҫ, хӑйсен шухӑш-кӑмӑлне хӑнасен кӗнекинче ҫырса хӑварчӗҫ. Тюмень облаҫӗн делегацийӗ те музей ӗҫӗ-хӗлӗпе ятарласах пырса паллашрӗ, ял халӑхӗпе тӗл пулчӗ.

Музей аслӑ композиторӑн пултарулӑхне халӑх хушшине сарас ӗҫпе те нумай ӗҫлет. Эпир ҫулталӑкра виҫӗ-тӑватӑ концерт ирттересси ҫирӗп йӑлана кӗчӗ. Ф. Лукинпа пӗрле ӗҫленӗ композиторсем, поэтсем, юрӑҫсем, музыка деятелӗсем пирӗн пата хаваспах пыраҫҫӗ, калаҫӑва хутшӑнаҫҫӗ, концертсенче хӑйсен пултарулӑхне кӑтартаҫҫӗ. Ваҫлей Давыдов-Анатри, Георгий Ефимов, Петӗр Ялкир, Анатолий Кибеч, Раиса Сарпи, Юрий Илюхин, Юрий Григорьев, Александр Васильев, Николай Зимин, Николай Карлин, Юрий Кудаков, Алевтина Зинкина, Петр Заломнов, Станислав Кондратьев, Юрий Прокопьев, Зоя Лисицына, Тамара Гурьева, Зоя Ананьева, Иван Христофоров, Агриппина Иванова, Галина Пуклакова тата ыттисем пирӗн пата килсех тӑраҫҫӗ. Май килнӗ пек чухне эпӗ Шупашкарти Ф.П. Павлов ячӗллӗ музыка училищине тата культура институтне тав туса хӑварасшӑн, мӗншӗн тесен вӗсем музее ӑслӑлӑх шайӗпе пулӑшса пыраҫҫӗ, юрӑҫсен республикӑри Ф.М. Лукин ячӗллӗ конкурсне ирттерес ӗҫе те пуҫаруллӑн хутшӑнаҫҫӗ.

Музей пирӗн сумлӑ ентешӗмӗр 90 ҫул тултарнине республика шайӗпе ирттерес ӗҫе хутшӑнма ятарлӑ план туса хатӗрлерӗ, вӑл республикӑри мероприятисен программипе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать.

*Николай Матвеев,*
Ф.М. Лукин музейӗн директорӗ.